ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

# МАТЕМАТИКĂН ЧИ АНСАТ ĂНЛАНĂВĔСЕМПЕ ПАЛЛАШТАРАССИ

**Вĕрентӳллĕ вăйăсен пуххи**

Шкул умĕнхи вĕренĕвĕн программине
2–3 çулхи ачасемпе пурнăçлакан
воспитательсем валли хатĕрленĕ меслет кăтартăвĕ

Шупашкар 2021

УДК 51(07)
ББК 74.262.21
М 34

Пухса хатĕрлекенĕсем:

***И.В. Ядранская***, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн ертӳçи,

***Л.А. Смирнова***, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн регион аталанăвĕ центрĕн методисчĕ

Пособие хатĕрлеме хутшăннă педагогсем:

*О.Л. Васильева*, Чăваш Республикин профессилле вăтам пĕлӳ паракан Канашри педагогика колледжĕн преподавателĕ,

*Е.Г. Лаврентьева*, Чăваш Республикинчи Красноармейски районĕн «Пучах» ача сачĕн воспитателĕ,

*С.А. Максимова*, Чăваш Республикин Куславкка хулин «Çăлтăр» ача сачĕн воспитателĕ,

*М.П. Мижакова*, Чăваш Республикин Куславкка районĕн «Вĕлле хурчĕ» ача сачĕн воспитателĕ.

М34 Шкул çулне çитмен ачасене математикăн чи ансат ăнланăвĕсемпе паллаштарасси / И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар: ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ. 2021. – 40 с.

Меслет кăтартăвне «Ача çуралнăранпа шкула кайиччен» программăпа ĕçлекен педагогсене, çавăн пекех шкул çулне çитмен ачасене математикăн ăнланăвĕсемпе паллаштаракансене пулăшас тĕллевпе хатĕрленĕ.

**УДК 51(07)**
**ББК 74.262.21**

© И.В. Ядранская, Л.А. Смирнова пухса хатĕрленĕ, 2021
© ЧР ВМХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ

# УМӖН КАЛАНИ

Вӗрентӳллӗ вӑййсен пуххине ача садӗнче ӗҫлекен воспитательсем валли хатӗрленӗ.

Пособи «Ача ҫуралнӑранпа шкула кайиччен» (Н.Е. Вераксы, Т.С. Комарова, М.А. Васильева редакциленӗ) программа ҫинче никӗсленет, кӗҫӗн ӳсӗмри иккӗмӗш ушкӑна ҫӳрекен ачасене математикӑн чи ансат ӑнланӑвӗсемпе паллаштарать.

Программӑпа килӗшӳллӗн, «Ӑс-тӑн аталанӑвӗ» вӗренӳ усӑлӑхне «Математикӑн чи ансат ӑнланӑвӗсемпе паллаштарасси» пая кӗртнӗ, унта «Хисеп», «Калӑп» (Япала форми), «Пысӑкӑш», «Тавралӑха чухлани» тытӑмсене пӑхса тухма палӑртнӑ. Кӗнекере вӗренӳ ӗҫ-хӗлӗ мӗнле йӗркеленсе пынине кӑтартса панӑ. Пособие тӗрлӗ вӑййсемпе хӑнӑхтарусем кӗртнӗ, сӑвӑ-юрӑпа пуянлатнӑ.

Кӗнекере пурӗ 32 вӗрентӳллӗ вӑййӑ (юпа уйӑхӗнчен пуҫласа ака уйӑхӗччен кашни эрнере пӗрер вӗрентӳллӗ вӑййӑ иртermelle, йӗркелӳ саманчӗсене шута илсе авӑн тата ҫу уйӑхӗсенче уйӑхне пӗтӗмпе 2 вӗрентӳллӗ вӑййӑ иртterme палӑртнӑ).

Вӗрентӳллӗ вӑййӑ иртternӗ чухне воспитателӗн ӑнлавсене тӳрремӗнех вӗрентмелле мар, ачасене хӑйсене чухласа илмелли майсем туса памалла. Математикӑн чи ансат ӑнланӑвӗсем ҫинче чарӑнса тӑни те ҫителӗксӗр, вӑййӑра усӑ куракан япаласен ятне те каласа хӑвармалла.

Сюжетлӑ вӑййсем, ятарлӑ хӑнӑхтарусем ача ӑс-тӑнне, тимлӗхне аталантараҫҫӗ, ушкӑнпа ӗҫлеме хӑнӑхтараҫҫӗ.

Ӑнлавсем ача ӑс-тӑнӗнче ҫирӗпленсе юлччӑр тесен вӗсене темиҫе хутчен калаттармалла, вӗрентӳллӗ вӑййӑра ҫеҫ мар, уҫӑлса ҫӳренӗ чухне те, ытти самантсенче те аса илтерсе тӑмалла.

Воспитателӗн вӗренӳ ӗҫӗ-хӗлӗн тӗрлӗ тӗсӗсене пӗрлештерсе вӗрентмелле, ал айӗнчи пур хатӗр-хӗтӗрпе, теттесемпе анлӑн усӑ курмалла.

# ПРОГРАММА СОДЕРЖАНИЙĔ

**Хисеп.**

Пĕр пек формăллă япаласене уйăрса илесси, япала *пĕрре (сахал) е нумай* пулнине чухлама хăнăхтарасси.

**Пысăкăш.**

Япаласем пысăкăшĕпе тĕрлĕрен пулма пултарнине кăтартасси, *пысăк(кă), пĕчĕк(кĕ)* ăнлавсемпе ĕçлесси.

**Калăп (Япала форми).**

Япаласене калăпне кура уйăрасси, ятпа каласси – *кубик, чăмăр (шар), кирпĕч (кирпĕч калăпĕллĕ коробка).*

**Тавралăха чухлани.**

Тавралăха ăнланма вĕрентесси. Çывăрмалли, вылямалли, çăвăнмалли пӳлĕмсене тупма хăнăхтарасси. Ӳт-пӳ пайĕсене пĕлесси (*пуç, пит, алă, ура, çурăм*). Воспитатель хыççăн (вăл утнă еннелле) утма хăнăхтарасси.

## Аван уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Мечĕк кустарни

***Тĕллевсем:*** япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: пĕр тĕслĕ тата пĕр калăпăшлă мечĕксем (кашни ачапа воспитатель валли), карçинкка.

В ă й ă  ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь пӳлĕме мечĕк тултарнă карçинкка илсе кĕрет.

В о с п и т а т е л ь. Ку – мечĕк. Кусем – мечĕксем. Ачасем, халĕ пĕрле калатпăр: ку – мечĕк.

Ачасем *мечĕк* сăмаха тепĕр хут калаççĕ.
Воспитатель мечĕкпе мĕн-мĕн тума пултарнине ăна *кустарса*, *ывăтса* кăтартать.

Манăн пĕчĕк мечĕк пур,
Кускалать вăл, акă, кур!

В о с п и т а т е л ь (*ачасене мечĕкпе выляма сĕнсе*). Ачасем, мечĕке карçинккаран илсе кустарăр. Ăна хăваласа çитĕр те: «Мечĕк», – тесе калăр.

Ачасем воспитатель хушнă ĕçсене тăваççĕ: мечĕке кустараççĕ, ывăтаççĕ, хăваласа çитсе алла илеççĕ те каялла карçинккана хураççĕ.

Заняти вĕçĕнче воспитатель: «Мечĕксем карçинккара», – тесе çирĕплетет.

Вăйă 2–3 хут иртет.

### *2-мĕш вăйă.* Пирамидка пуçтарни

***Тĕллевсем:*** япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси, ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** коробка, пирамидкăсем (кашни ачапа воспитатель валли).

В ă й ă  ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь (*ачасене пирамидка кăтартса*). Ку – пирамидка. Ун çинче çаврашкасем пур. (*Пирамидкăна салатать, çаврашкисене коробкăна хурать.*) Ачасем, халĕ пирамидка пуçтаратпăр.

Воспитатель ачасене çаврашкасене пирамидка тĕнĕлĕ (стержень) çине мĕнле тирмеллине кăтартать. Ачасем çак ĕçе воспитатель кăтартнă пек тăваççĕ.
Ку вăййа темиçе хут иртерме юрать.

# Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

## *1-мĕш вăйă.* «Хăшĕ кусать, хăшĕ кусмасть» хăнăхтару

***Тĕллевсем:*** япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси: кустарасси, вырнаçтарасси; япалан калăпне (формине) алăпа кăтартса парасси; ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: вылямалли тиев машини, 2 коробка, ача тытма пултаракан пĕр калăпăшлă тата пĕр тĕслĕ мечĕксемпе кубиксем (кашни ачапа воспитатель валли).

### В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь пӳлĕме мечĕк тултарнă хупă коробка йăтса кĕрет, ăна силлесе сасă кăларать.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра мĕн пур-ши? *(Ачасене унта мĕн пуррине кăтартать.)* Кусем мĕнсем? Кусем – *мечĕксем*. (*Пĕр мечĕкне илсе аллипе шăлкалать.*) Ку – мечĕк. Вăл çавракa, ăна кустарма пулать. (*Пĕр аллинчен тепĕр алли çине кустарать.*) Халĕ, ачасем, пĕрер мечĕк илĕр те мĕн илнине калăр.

Ачасем воспитатель кăтартнă пек мечĕксене шăлкалаççĕ, пĕр аллинчен тепĕр алли çине кустараççĕ.
Воспитатель вылямалли тиев машини илсе тухать, черетпе кашни ача патне пырса мечĕксене унта хума ыйтать. Ачасем мĕн хунине сăмахпа каласа çирĕплетет.
Çакăн пек ĕçех кубиксемпе тăваççĕ. Ачасем кубиксене илеççĕ те: «Ку кубик», – теççĕ. Воспитатель ыйтнипе тата кăтартнипе кубик енĕсене алăпа кăтартса параççĕ (*яка*), сĕтел çине хураççĕ, кустарма хăтланаççĕ.
Воспитатель ачасене тепĕр аллипе мечĕк илме ыйтать те кустарма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Хăш япали кусать-ши? Кубик е мечĕк кусать?
А ч а с е м. Мечĕк кусать, кубик кусмасть.

Воспитатель каланипе ачасем тĕрлĕ коробкăна мечĕк е кубик хураççĕ, мĕн хунине каласа пыраççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* Япала пытарни

***Тĕллевсем:*** япалан калăпне уйăрма тата вĕсен ячĕсене калама вĕрентесси: *кубик, мечĕк е чăмăр (шар)*. Япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси: кустарасси, вырнаçтарасси. Ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** вылямалли тиев машини, 2 коробка, пĕр тĕслĕ тата калăпăшлă мечĕксемпе кубиксем (кашни ачапа воспитатель валли).

**В а й ă   ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь мечĕксемпе кубиксем тиенĕ вылямалли машина кустарса кĕрет.
Кубик кăтартать, ятне калать («Ку – кубик»), вăл яка енлĕ тата
ăна сĕтел çине хума май пуррине палăртать.
Мечĕкпе те çак ĕçе пурнăçлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ку – мечĕк. Вăл çаврака. Ăна кустарма пулать. Халĕ эпир, ачасем, япала пытармалла выльăпăр. Сирĕн алăри мечĕке е кубике пытармалла пулать.

Воспитатель ыйтнипе ачасем черетлесе япаласене çурăм хыçне пытараççĕ,
мĕн пытарнине калаççĕ. Унтан алăра мĕн пуррине кăтартаççĕ, ятне калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*пĕтĕмлетсе*). Кубике пытартăмăр, мечĕк алăра юлчĕ.

Вăйă 2–3 хут иртет.
Ачасем кубиксене, мечĕксене коробкăна хураççĕ, мĕн хунине асăнаççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* «Пĕр евĕрлине туп»

***Тĕллевсем:*** япалан ячĕсене калама тата калăпне кура уйăрма вĕрентесси: *кирпĕч (кирпĕч калăпĕллĕ коробка), мечĕк е чăмăр (шар).* Япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси: кустарасси, вырнаçтарасси, ансат кӳлепесем купаласси. Ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем*:** тĕрлĕ тĕслĕ икĕ коробка, пĕр калăпăшлă тата пĕр тĕслĕ кирпĕчсемпе мечĕксем (кашни ачапа воспитатель валли).

**В а й ă   ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь пӳлĕме кирпĕчсемпе мечĕксем тултарнă хупă коробка илсе кĕрет.
Малтан мечĕкпе ĕçлеççĕ, вăл мĕн тĕслине палăртаççĕ, унпа мĕн тума пултарнине
кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ку – мечĕк. Мечĕк сарă тĕслĕ. Мечĕк кусать. *(Мечĕке кустарса ярса аллине кирпĕч илет.)* Ку кирпĕч пĕчĕк. *(Кирпĕчĕн кашни енне шăлать.)* Кирпĕч яка. Ăна тĕрлĕ енĕпе хума пулать. *(Кирпĕче анлă тата ансăр енĕпе хурса кăтартать.)* Ачасем, халĕ пирĕн коробкăра выртакан çакăн евĕрлĕ кирпĕчсене тупмалла пулать.

Ачасем кирпĕч мĕн тĕслĕ пулнине калаççĕ, унăн енĕсене шăлса кăтартаççĕ, кирпĕче мĕнле хума май пуррине палăртаççĕ. Воспитателе евĕрлесе кирпĕче сĕтел çине тĕрлĕ енĕпе хурса кăтартаççĕ. Воспитатель ачасен ĕçне ăнлантарса пырать, кашни ачана ыйту çине хуравлама хистет.

В о с п и т а т е л ь. Кирпĕчсемпе тата мĕн тума пулать-ши?

Ачасем воспитательпе пĕрле кирпĕчсенчен çул сараççĕ.
Воспитатель коробкăран мечĕксем илме сĕнет. Вĕсен тĕсне тата вĕсемпе мĕн тума пултарнине аса илтерет. *(Кустарма пулать.)* Ачасем воспитательпе пĕрле мечĕксене кирпĕчрен тунă çулпа кустараççĕ.
Воспитатель ачасене мечĕксене хĕрлĕ коробкăна хума ыйтать, кирпĕчсене – сарă коробкăна. Ĕçе тунă май воспитатель ачасем коробкăсене мĕн хурса пынине тепĕр хут каласа çирĕплетсе пырать.

## *4-мĕш вăйă.* Матрёшкăсем валли пукансем хатĕрлени

***Тĕллевсем:*** япалан формине уйăрма тата вĕсен ячĕсене калама вĕрентесси: *кирпĕч, кубик*. Япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси: кустарасси, вырнаçтарасси, ансат япаласем купаласси. Ăнлавсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** матрёшкăсем е урăх тетте (кашни ачапа воспитатель валли), пĕр калăпăшлă тата пĕр тĕслĕ кубиксемпе кирпĕчсем (кашни ачапа воспитатель валли), кубиксемпе кирпĕчсем хумалли коробка.

### Вăйă юхăмĕ

Воспитатель «Матрёшкăсем валли пукансем хатĕрлетпĕр» вăйăллă лару-тăру йĕркелет.

В о с п и т а т е л ь. Матрёшкăсем инçетрен çитнĕ, вĕсем ывăннă. Ачасем, атьăр теттесем валли пукансем тăватпăр. *(Кубик илет.)* Ку мĕн? Унпа мĕн тума пулать? Тĕрлĕ енпе хума пулать. (*Кубике сĕтел çине хурать те кирпĕч илет.)* Ку мĕн? Унпа мĕн тума пулать? Çапла, тĕрлĕ енĕпе хума е тăратса лартма пулать. *(Кирпĕче анлă енĕпе кубик çумне тăратса лартать.)* Ачасем, матрёшка валли пукан пулчĕ те. *(Çак ĕçе сăмахсемпе çирĕплетсе тепĕр хутчен туса кăтартать.)* Кубике хуратпăр, юнашар кирпĕч тăратса лартатпăр – пукан пулчĕ те.

Воспитатель ачасене черетпе коробкăран кубик е кирпĕч илме, вăл мĕн пулнине калама тата ăна сĕтел çине хума сĕнет. Унтан кирпĕче илсе тĕслĕхри пек кубикпе юнашар вырнаçтарса пукан тума ыйтать.
Воспитатель Э.Табаев çырнă «Пукане» юрра юрлать.

В о с п и т а т е л ь.

Парнелерĕ асанне
Мана пĕчĕк пукане.
Çутă кăвак куçлине,
Йăлтăр сарă çӳçлине.

*Хушса юрламалли:*
Пукане, пукане, эс пăхатăн ман çине,
Пукане, пукане, эп пулам саншăн анне.

Ирхине тăрать пĕрле
Манăн пĕчĕк пукане.
Савăнатпăр та пĕрле,
Вăй вылятпăр та пĕрле.

*Хушса юрламалли.*

Кунĕпе манпа вылять,
Çавăнпа та ывăнать.
Каçхине юмах ыйтать –
Хыççăн лăпкă çывăрать.

*Хушса юрламалли.*

Ачасем матрĕшкăсене илсе вĕсемпе ташлаççĕ. Унтан теттисене канма пукан çине лартаççĕ, хăйсем те юнашар ларaççĕ.

# Чӳк уйăхӗнче ирттермелли вӗрентӳллӗ вăйăсем

## *1-мӗш вăйă.* Хутаçра мӗн-ши?

***Тӗллевсем:*** япалан ячӗсене калама тата вӗсен формине уйăрма вӗрентесси: *кирпӗч, кубик, мечӗк*; япаласемпе тӗрлӗ ӗç-хӗл тăвасси: кустарасси, вырнаçтарасси, ансат япаласем купаласси; ăнлавсене çирӗплетесси.

***Кăтарту хатӗрӗсем*:** «асамлă» хутаç, кубиксем, мечӗксем, пӗр тӗслӗ тата калăпăшлă кирпӗчсем (кашни ачапа воспитатель валли), 3 коробка.

**В ă й ă   ю х ă м ӗ**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, ку «асамлă» хутаç. Унта тӗрлӗ теттесем пытаннă. Хутаçра мӗн-ши? (*Хутаçран мечӗк кăларать.*) Ку мӗн? Унпа мӗн тума пулать? (*Мечӗке кустарса кăтартать те пӗрремӗш коробкăна хурать, «асамлă» хутаçран кубик кăларать.*) Ачасем, ку мӗн? Унпа мӗн тума пулать? *(Кубике тӗрлӗ енӗпе хурса кăтартать, кайран иккӗмӗш коробкăна хурать.)*

Воспитатель çак хăнăхтарăва кирпӗчпе те туса кăтартать, ачасем ун ятне каланă хыççăн кирпӗче виççӗмӗш коробкăна хурать, ачасене коробкăсенче мӗн выртнине калама хушать. Унтан «асамлă» хутаçран ачасем черетпе пӗр-пӗр япала илеççӗ, ятне калаççӗ, унпа мӗнле ӗç тума пултарнине кăтартаççӗ, кирлӗ коробкăна хураççӗ: мечӗксене – мечӗксен коробкине, кубиксене – кубиксенне тата ыт.те.
Вăйă «асамлă» хутаç пушаниччен тăсăлать.
Вăйă вӗçленсен ачасем кашни коробкăра мӗнле япала выртнине калаççӗ.

## *2-мӗш вăйă.* Теттесене урама тухма пуçтарни

***Тӗллевсем:*** япаласем тӗрлӗ пысăкăшлă пулнине палăртасси; *пысăк, пӗчӗк* ăнлавсемпе паллаштарасси; ăнлавсене çирӗплетесси.

***Кăтарту хатӗрӗсем:*** вылямалли машина, пӗр тӗслӗ пысăк тата пӗчӗк витресем (кашни ачапа воспитатель валли), пӗр тӗслӗ тӗрлӗ пысăкăшлă теттесем е ӗлкесем.

**В ă й ă   ю х ă м ӗ**

В о с п и т а т е л ь *(тӗрлӗ пысăкăшлă витресем кăтартса).* Ку – витре, кусем – витресем. Вӗсем тӗрлӗрен. Витресен пысăкăшӗ тӗрлӗрен. Ку – пысăк витре. Ку – пӗчӗк витре. Ачасем, атьăр манпа пӗрле тепӗр хут калатпăр.

А ч а с е м *(воспитательпе пӗрле).* Ку – пысăк витре. Ку – пӗчӗк витре.

В о с п и т а т е л ь *(пӗчӗк витрене пысăк витре ăшне лартса).* Пӗчӗк витре «пытанчӗ», пысăк витре ăшне вырнаçрӗ.

Воспитатель витресене юнашар лартать те формăсене (кубик, мечӗк, чăмăр) витрене хума сӗнет.

Воспитатель ĕлкесем (формăсем) тиенĕ машина кăтартать.
Пысăк тата пĕчĕк ĕлкесене юнашар хурать, танлаштарать. Унтан ачасем пысăк (пĕчĕк) формăсене кăтартаççĕ, каласа пыраççĕ.
Воспитатель пысăк ĕлкесене пысăк витрене, пĕчĕккисене пĕчĕк витрене хума сĕнет.
Воспитатель пулăшнипе ачасем пысăк ĕлкесене пысăк витрене хураççĕ, унтан пĕчĕккисемпе ĕçлеççĕ. Воспитатель ачасен ĕçне сăмахпа каласа пырать.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк витрене пысăк ĕлкесене хутăмăр, пĕчĕк витрене – пĕчĕк ĕлкесем.

## *3-мĕш вăйă.* Пысăк тата пĕчĕк матрёшкăсем

***Тĕллевсем:*** япаласем тĕрлĕ пысăкăшлă пулнине палăртасси, *пысăк, пĕчĕк* ăнлавсене çирĕплетесси, япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тума хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем***: йĕкĕр матрёшка (кашни ачапа воспитатель валли), тĕрлĕ пысăкăшлă симĕс те çаврака «уçланкăсем», коробка, хăю, тĕрлĕ тетте.

**В ă й ă   ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь  хăюпа çавăрса çыхнă коробка йăтса кĕрет.

В о с п и т а т е л ь (*коробкăна уçса*). Коробкăра мĕн пур-ши? *(Матрёшка туртса кăларать.)*

А ч а с е м *(матрёшка илсе).* Ку – матрёшка.

Ачасем тĕрлĕ хусканусем кăтартаççĕ: матрёшкăсем утаççĕ, сикеççĕ.
Унтан воспитатель матрёшкăна силлеме тата унта мĕн пытаннине пĕлме ыйтать.
Воспитательпе пĕрле ачасем матрёшкăран пĕчĕк матрёшка кăлараççĕ.
Матрёшкăсене юнашар лартаççĕ, танлаштараççĕ. Ачасем пысăк тата пĕчĕк матрёшкăна кăтартаççĕ, сăмахпа калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь *(«уçланкăсене» кăтартса*). Ачасем, пысăк матрёшкăсем пысăк уçланкăра вăйă картине тăраççĕ, пĕчĕккисем – пĕчĕк уçланкăра. Атьăр вĕсене хăйсен вырăнне тăма пулăшар.

Ачасем воспитательпе пĕрле ĕçлеççĕ, хăйсем мĕн тунине сăмахпа каласа пыраççĕ.

А ч а с е м. Пысăк вăйă картинче пысăк матрёшкăсем, пĕчĕккинче – пĕчĕк матрёшкăсем.

Воспитательпе ачасем пурте пĕрле тăраççĕ те вăйă карти тăваççĕ.
Теттесем илсе Б. Чиндыков сăвви тăрăх Н. Казаков кĕвĕленĕ «Пирĕн йытă» юррăн сыпăкне юрлаççĕ.

В о с п и т а т е л ь п е   а ч а с е м.

Пирĕн кушак пысăккă!
Пирĕн кушак пĕчĕккĕ!

Пирĕн кушак хуп-хура!
Пирĕн кушак шап-шурă!

Пирĕн кушак мăр-мăр-мăр!
Пирĕн кушак кăс-кăс-кăс!
Пирĕн кушак – ампарта!
Пирĕн кушак – ыйхăра!

*Хушса юрламалли.*
Мăр-мăр-мăр! Мăр-мăр-мăр-мăр!
Кăс-кăс-кăс! Кăс-кăс-кăс-кăс!

## *4-мĕш вăйă.* Кермен купалани

***Тĕллевсем:*** япаласен пысăкăшĕ тĕрлĕрен пулнине палăртасси, *пысăк, пĕчĕк* ăнлавсене ҫирĕплетесси; ансат япаласем купалама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пукане, пĕр тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк кубиксем (ачасем тата воспитатель валли), коробка.

### В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель ачасене хăнана килнĕ пуканепе паллаштарать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата хăнана пукане килнĕ. Пукане, эсĕ мĕн ятлă?

Воспитатель сассине улăштарса пуканешĕн те калаҫать.

П у к а н е. Эпĕ Маша ятлă. Ачасем, эсир мĕн ятлă?

Ачасем хăйсен ячĕсене калаҫҫĕ.

В о с п и т а т е л ь. Маша кубиксем тултарнă коробка илсе килнĕ. *(Коробкăра мĕн пуррине кăтартса.)* Ачасем, Маша мĕн илсе килнĕ?

А ч а с е м. Кубиксем.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксем мĕн тĕслĕ?

Воспитатель сĕтел ҫине пысăк тата пĕчĕк кубиксем хурать, вĕсене танлаштарма ыйтать Ачасем коробкăран пысăк (е пĕчĕк) кубик суйласа илеҫҫĕ, сăмахпа калаҫҫĕ.

А ч а с е м. Ку пысăк кубик! Ку пĕчĕк кубик!

Тĕрлĕ пысăкашлă кубиксене юнашар лартаҫҫĕ, танлаштараҫҫĕ.

П у к а н е. Ачасем, атьăр «Кубике пытарăр» вăйă вылятпăр.

Ачасем черетпе пысăк е пĕчĕк кубике ҫурăм хыҫне пытараҫҫĕ, хăшне пытарнине, мĕнле кубик юлнине палăртаҫҫĕ.

В о с п и т а т е л ь (*аллинчи пуканене*). Маша, пирĕн ачасем маттур-и?

П у к а н е. Çапла, садик ачисем питĕ маттур! Ачасем, атьăр, кубиксенчен кермен купаламлла вылятпăр!

Воспитатель ачасене мĕнле майпа çӳллĕ çурт купаламаллине кăтартать, ĕç йĕркине каласа пырать.

В о с п и т а т е л ь. Пĕчĕк кубике пысăк кубик çине лартатпăр. Кермен пулчĕ те!

Ачасем воспитатель кăтартнă пек ĕçлеççĕ, мĕн пулнине калаççĕ. Маша çуртсене пăхса тухать, ачасене ырлать. Ачасем Машăна «Пирĕн йытă» юрă сыпăкне юрласа пама пултараççĕ.

**Пирĕн йытă**

– Пирĕн йытă пысăккă!..
– Пирĕн йытă пĕчĕккĕ!
– Пирĕн йытă хуп-хура!..
– Пирĕн йытă шап-шурă!..
– Пирĕн йытă – сăнчăрта!..
– Пирĕн йытă – урамра!..
– Пирĕн йытă – хуралта!..
– Пирĕн йытă – сунарта!..

*Хушса юрламалли:*

– Ав-ав-ав, ав-ав-ав-ав!..
Ав-ав-ав, ав-ав-ав-ав!..

# Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

## *1-мĕш вăйă.* Мечĕке кавир тăрăх кустарни

***Тĕллевсем: я***паласен пысăкăшĕ тĕрлĕрен пулнине палăртасси, *пысăк, пĕчĕк* ăнлавсене çирĕплетесси; япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвассине çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** карçинкка, пĕр тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк мечĕксем е чăмăрсем (кашни ачапа воспитатель валли), пысăк тата пĕчĕк хут листисем – «кавирсем».

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь  карçинккапа мечĕксем илсе килет.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккара мĕн пур? Вĕсем мĕн тĕслĕ?

Воспитатель карçинккаран пысăк тата пĕчĕк мечĕксене илсе сĕтел çине хурать, танлаштарать. Ачасем япала пысăкăшне палăртаççĕ: пĕчĕк мечĕк алă тупанне вырнаçать, пысăкки вырнаçмасть.
Воспитатель ачасене пысăк тата пĕчĕк хут листисем – «кавирсем» – кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк мечĕк пысăк кавир çинче кусать.

Ачасем воспитатель каланипе пысăк мечĕк суйласа илеççĕ, ăна пысăк «кавир» çинче кустараççĕ, сăмахпа каласа пыраççĕ.

А ч а с е м. Пысăк мечĕк пысăк кавир çинче кусать.

Воспитательпе ачасем çак мелпех пĕчĕк мечĕкпе ĕçлеççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*ĕçе пĕтĕмлетсе*). Эпир пысăк мечĕке пысăк кавир çинче кустартăмăр, пĕчĕккине – пĕчĕкки çинче.

## *2-мĕш вăйă.* Теттесем суйлани

***Тĕллевсем:*** япаласене пысăкăшне кура танлаштарма, ушкăнлама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тĕрлĕ пысăкăшлă пĕр тĕслĕ кубиксем, мечĕксем, пысăк тата пĕчĕк пуканесем, виçĕ коробка (2 пысăкки тата 1 пĕчĕкки), ывăс.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата хăнана пуканесем килчĕç. Катя – пысăк пукане. Маша – пĕчĕк пукане.

Воспитатель ачасене пуканесене сывлăх сунма сĕнет. Вĕсем пысăк е пĕчĕк пулнине калама ыйтать.

А ч а с е м. Катя – пысăк пукане. Маша – пĕчĕк пукане.

Воспитатель коробка илсе кĕрет, унта мĕн пуррине калать.

В о с п и т а т е л ь. Кунта – кубиксемпе мечĕксем. (*Пысăк тата пĕчĕк мечĕксене сĕтел çине хурать.*) Ачасем, кусем мĕнсем? Вĕсем пĕр пек-и?

А ч а с е м. Пĕр пек мар. Ку – пысăк мечĕк, ку – пĕчĕк мечĕк.

Унтан ачасем мечĕксене коробкăран хăйсем туртса кăлараççĕ, мĕнле мечĕк илнине сăмахпа калаççĕ, пысăкăшне палăртаççĕ, алăпа тытса тĕрĕслеççĕ, пĕр алăран теприн çине кустараççĕ, ывăссем çине хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр Катьăна, пысăк пуканене, пысăк мечĕк парнелетпĕр. Пысăк Катя валли – пысăк мечĕк! Машăна, пĕчĕк пуканене, – пĕчĕкки.

Ачасем пысăкăшне кура мечĕксене ушкăнлаççĕ. Ĕçленĕçемĕн сăвăлаççĕ.

А ч а с е м.

Манăн пĕчĕк мечĕк пур,
Кускалать вăл акă кур!
Манăн пысăк мечĕк пур,
Кускалать вăл акă кур!

Ачасем мечĕксене пысăкăшне кура пысăк е пĕчĕк коробкăна вырнаçтараççĕ. Çак йĕркепех кубиксемпе ĕçлеççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*ĕçе пĕтĕмлетсе*). Пысăк Катя пуканене эпир пысăк кубиксемпе мечĕксем парнелерĕмĕр, пĕчĕк Маша пуканене – пĕчĕк кубиксемпе мечĕксем.

## *3-мĕш вăйă.* **Хаваслă матрёшкăсем**

***Тĕллевсем:*** пĕр пек формăллă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япала *пĕрре е нумай* пулнине чухлама хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** коробка, салфетка, пĕр пек матрёшкăсем (кашни ачапа воспитатель валли).

### **В ă й ă ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь салфеткăпа хупланă коробка илсе килет.

В о с п и т а т е л ь (*салфеткăна сирсе*).

Ак хаваслă матрёшкăсем,
Юратаççĕ чупма вĕсем.
Юрлама та ташлама,
Ачасемпе выляма.
Ачасем, кусем мĕнсем?

А ч а с е м. Матрёшкăсем.

В о с п и т а т е л ь. Матрёшкăсем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ пурте пĕрер матрёшка илетпĕр.

Ачасем пĕрер матрёшка илеççĕ, миçе матрёшка илнине сăмахпа калаççĕ (пĕрре), унпа ташлаççĕ.
Воспитатель ачасене черетпе матрёшкăсене коробкăна хума сĕнет, кашни ача мĕнле ĕç тунине воспитатель сăмахпа каласа пырать.

В о с п и т а т е л ь. Акă матрёшка, акă тата матрёшка, тата тепĕр матрёшка... (*Алăпа матрёшкăсем çине кăтартса.*) Кунта матрёшка нумай.

Ачасем воспитательпе пĕрле каласа пыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра матрёшка нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь *(ачасен хуравне çирĕплетсе)*. Çапла, коробкăра матрёшка нумай. (*Хăйĕн матрёшкине кăтартса.*) Манăн вара пĕр матрёшка. Ачасем, манăн миçе матрёшка?

А ч а с е м. Пĕр матрёшка.

В о с п и т а т е л ь (*матрёшкăна коробкăна хурса ĕçе пĕтĕмлетет*). Коробкăра матрёшка нумай.

## *4-мĕш вăййă.* Юр пĕрчипе ташлани

***Тĕллевсем:*** пĕр пек формăллă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япала *пĕрре е нумай* пулнине чухлама хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** коробка, пĕр пек шурă юр пĕрчисем (*кашни ачапа воспитатель валли*).

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Вăйă пуçланиччен воспитатель юр пĕрчисене кавир çине сарса хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ку мĕн?

А ч а с е м. Юр пĕрчи.

В о с п и т а т е л ь. Вăл мĕн тĕслĕ?

А ч а с е м. Шурă.

В о с п и т а т е л ь. Манăн пĕр юр пĕрчи. Ман алăра миçе юр пĕрчи?

А ч а с е м. Пĕрре.

Воспитатель кавир çинче выртакан юр пĕрчисене сăнама хушать.

В о с п и т а т е л ь. Кавир çинче юр пĕрчи нумай. Ачасем, кавир çинче юр пĕрчи мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене пӗрер юр пӗрчи илме хушать. Унтан ачасене ятран чӗнсе ҫапла ыйтать: «Катя, санӑн алӑра мӗн? Юр пӗрчи мӗн тӗслӗ? Алӑра юр пӗрчи мӗн чухлӗ?». Ачасем юр пӗрчи тытса ташлаҫҫӗ, воспитательпе пӗрле сӑвӑлаҫҫӗ.

А ч а с е м.

Шурӑ-шурӑ юр пӗрчи,
Нумай-нумай юр пӗрчи.

В о с п и т а т е л ь (*юр пӗрчисене коробкӑна хурать, сӑмахпа ӑнлантарса пырать*). Акӑ пӗр юр пӗрчи, акӑ тата юр пӗрчи… Акӑ мӗн чухлӗ нумай юр пӗрчи. Коробкара юр пӗрчи мӗн чухлӗ? *(Нумай).* Нумай-нумай юр пӗрчирен юр купи туса хутӑмӑр.

Воспитатель ачасене Уйӑп Мишшин «Хӗл ҫитрӗ» сӑввине вуласа парать.

В о с п и т а т е л ь.

Шурӑ юрӗ ҫурӗ, ҫурӗ,
Таврана шап-шурӑ турӗ.
Ҫунасем юр ҫийӗн шурӗҫ.
Килчӗ ҫитрӗ Хӗл Мучи!

## Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Ялавсене тĕсне кура суйлани**

***Тĕллевсем:*** пĕр пек калăплă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япала *нумай* пулнине чухлама хăнăхтарасси; япалана нумайлă хисепре калама вĕрентесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** кăвак тата хĕрлĕ тĕслĕ ялавсем (кашни ачапа воспитатель валли), икĕ коробка, икĕ ваза.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Воспитатель коробкăри япаласене кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Кусем – ялавсем. Ялавсем хĕрлĕ тĕслĕ. Хĕрлĕ ялав мĕн чухлĕ? *(Нумай.)*

Ачасене ятран чĕнсе воспитатель хĕрлĕ ялав суйлама сĕнет, сăмахпа ăнлантарса пырать: «Саша, санăн хĕрлĕ тĕслĕ ялав, Катя, санăн та…Эпĕ те хĕрлĕ тĕслĕ ялав илетĕп. Санăн алăра мĕн?». *Ялав* сăмаха воспитатель кашни ачана калаттарать.
Ачасем ялавпа тĕрлĕ хусканусем тăваççĕ: пуç тăрринче, хăйсен умĕнче сулласçĕ, çурăм хыçне пытараççĕ.
Хăйĕн ялавне воспитатель вазăна хурать. Ун хыççăн ачасем те ялавĕсене вазăна хураççĕ. Воспитатель ялавсен шутне (*нумай*) тата вĕсен тĕсне (*хĕрлĕ*) палăртать.
Ун хыççăн ачасене коробкăри кăвак ялавсене пăхма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ку мĕн? *(Ялавсем.)* Ялавсем мĕн тĕслĕ? *(Кăвак.)* Кăвак ялавсем мĕн чухлĕ? *(Нумай.)*

Ачасем воспитательпе пĕрле пĕрер кăвак ялав илеççĕ те малтанхи пекех хусканусем туса тепĕр вазăна хураççĕ. Вазăри хĕрлĕ тата кăвак ялавсен шутне танлаштараççĕ.

А ч а с е м (*ĕçе пĕтĕмлетсе*). Хĕрлĕ ялавсем те, кăвак ялавсем те нумай.

### *2-мĕш вăйă.* **Юр чăмăрккисемпе выляни**

***Тĕллевсем:*** пĕр пек формăллă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япалан пысăкăшне палăртасси *(пысăк, пĕчĕк),* шутне уйăрасси *(пĕрре, нумай).*

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** карçинкка, 1 пысăк юр чăмăркки, пĕчĕкрех юр чăмăрккисем (кашни ача валли).

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь (*ачасене пысăк юр чăмăркки çине пăхма сĕнсе*). Ку мĕн?

А ч а с е м. Юр чăмăрки.

В о с п и т а т е л ь. Вăл мĕн тĕслĕ?

А ч а с е м. Шурă.

Воспитатель юр чăмăрккине кустарма, çӳлелле ывăтма май пуррине кăтартать. Унтан карçинккаран пĕчĕк юр чăмăрки илет те «Ку мĕн? Карçинккара миçе юр чăмăрки?» – тесе ыйтать. Воспитатель пĕр пĕчĕк юр чăмăрккине илсе пысăккипе юнашар хурать, пĕр-пĕринпе танлаштарать.

В о с п и т а т е л ь. Ку пысăк çаврашка (*икĕ алăпа тытса кăтартать*). Ку пĕчĕк çаврашка (*пĕр алла кĕрет*).

Воспитатель ачасене юр чăмăрккисене кăтартма тата вĕсен пысăкăшне палăртма сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Карçинккара юр чăмăркки мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Юр чăмăркки мĕнле?

А ч а с е м. Пĕчĕккĕ.

Воспитатель ачасене хăй тавра пуçтарса юр чăмăрккисемпе вăйă выляма сĕнет. Карçинккари юр чăмăрккисене кавир çине сапаласа хурать те пĕр чăмăрккине хăваласа çитме хушать. (Вăййа 2–3 хут иртерме юрать.) Воспитатель ачасене юр чăмăрккисене карçинккана пуçтарма сĕнет, хăйĕн юр чăмăрккине те унтах хурать.

В о с п и т а т е л ь (*вăййа пĕтĕмлетсе*). Пысăк юр чăмăркки – пĕрре, пĕчĕкки – нумай.

## *3-мĕш вăйă.* **Пысăк тата пĕчĕк мечĕксем**

***Тĕллевсем:*** пĕр пек калăплă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япалан пысăкăшне палăртасси *(пысăк, пĕчĕк),* шутне уйăрасси *(пĕрре, нумай).*

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ пысăк тата пĕчĕк мечĕксем (кашни ачапа воспитатель валли), 2 карçинкка.

### **В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь (*мечĕк тултарнă икĕ карçинккана кăтартса*). Ачасем, карçинккара мĕн пур?

А ч а с е м. Мечĕк.

В о с п и т а т е л ь. Мечĕк мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель икĕ ачана карçинккаран пĕрер мечĕк илме, унтан вĕсене юнашар хума сĕнет.

В о с п и т а т е л ь. Ку мечĕк пысăк-и? (*Икĕ алăпа тытса кăтартать.*)

А ч а с е м. Ку мечĕк пысăк.

В о с п и т а т е л ь. Ку мечĕк пĕчĕк-и? (*Пĕр алăпа тытса кăтартать.*)

А ч а с е м. Ку мечĕк пĕчĕк.

Ачасем воспитатель хыççăн хăйсем тĕллĕн çав ĕçсенех туса пыраççĕ, *пысăк*, *пĕчĕк* сăмахсене калаççĕ.
Воспитатель мечĕксене карçинкkана хунă май унта миçе пысăк мечĕк пулнине çирĕплетсе калать. *Нумай.* Пĕчĕк мечĕксем миçе? *Нумай.*
Воспитатель ачасене мечĕксемпе выляма сĕнет. Вăл пысăк мечĕксене карçинккаран кăларса сапалать те пĕр мечĕкне хуса çитсе карçинккана хума хушать. Кайран пĕчĕк мечĕксене сапалать. Ачасем мечĕке хуса çитсе каллех карçинккана хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*вăййа пĕтĕмлетсе*). Пысăк мечĕксем те, пĕчĕккисем те карçинккара нумай.

Вăййа 2–3 хут irttерме юрать.

## *4-мĕш вăйă.* Мулкачсемпе чăрăшсем

***Тĕллевсем:*** пĕр пек калăплă япаласене уйăрса илесси, ушкăнлама вĕрентесси, япалан шутне палăртасси *(сахал – нумай, нумай – сахал).*

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** симĕс хут листи («уçланкă»), 2 коробка, мулкачсем (кашни ача валли пĕрер тата икĕ мулкач), чăрăшсем (кашни ача валли пĕрер тата икĕ чăрăш), тĕрек çине вырнаçтарнă чăрăш.

**В ă й ă   ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь  коробкăпа мулкачсем илсе кĕрет.

В о с п и т а т е л ь (*коробкăна кăтартса*). Пирĕн пата хăнана мĕнсем килнĕ?

А ч а с е м. Мулкачсем.

В о с п и т а т е л ь. Мулкачсем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене пĕрер мулкач илсе вĕсене «уçланкăна» лартса тухма сĕнет.
Ачасемпе пĕрле ĕçленĕ май воспитатель мулкачсен йышне палăртса пырать.

В о с п и т а т е л ь. Акă пĕр мулкач, акă тата тепĕр мулкач... (*Мулкач нумаййине алăпа йĕри-тавра çавăрса кăтартать.*) Акă мĕн чухлĕ мулкач уçланкăра выляса çӳрет! Коробкăра вара миçе мулкач юлнă? (*Ачасене коробкăра юлнă юлашки мулкачсене кăтартма ыйтать.*) Акă мулкач, тата мулкач – коробкăра мулкач сахал.

Воспитатель кĕвĕ ярать, ачасене мулкачсем пек сиккелеме хушать.
Çав вăхăтра вăл мулкачсем хунă коробкăна пуçтарать, унтан «уçланка» икĕ чăрăш, вĕсемпе юнашар пĕр коробка чăрăш лартать.

В о с п и т а т е л ь (*ачасене «уçланкăри» чăрăшсене кăтартса*). Кунта миçе чăрăш? (*Чăрăшсене ывăçласа илет.*) Пур чăрăш та ывăçа кĕрет, мĕншĕн тесен вĕсем сахал. Атьăр-ха, ачасем, чăрăш мĕн чухлине сасăпа калар.

А ч а с е м. Сахал.

В о с п и т а т е л ь (*коробкăри чăрăшсене кăтартса*). Кунта вара чăрăш мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь (*коробкăри чăрăшсене ывăçласа илме тăрать, чăрăшсем ывăçа кĕмеççĕ*). Чăнах та, коробкăра чăрăш нумай. «Уçланкăра» чăрăш сахал, коробкăра чăрăш нумай.

Занятие «Хире те юр шуратнă» юрăпа вĕçлеме юрать.

Хире те юр шуратнă,
Садра та шурă юр,
Пӳртре çеç лăс туратлă
Çап-çамрăк чăрăш пур.

## Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Çӳллĕ çурт купалани

***Тĕллевсем:*** япаласен калăпне уйăрма тата вĕсен ячĕсене калама вĕрентесси (*кубик, çаврашка);* шутне палăртасси *(пĕрре – нумай);* япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ тата калăпăшлă кубиксемпе пирамидка (кашни ачапа воспитатель валли), 2 вылямалли машина.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь (*кубиксем тиенĕ машина кăтартса*). Машина çине мĕн тиенĕ?

А ч а с е м. Кубик, кубиксем.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель кашни ачана пĕрер кубик илме хушать.
Кубик илнĕ май ачасем: «Пĕр кубик», – тесе калаççĕ. Ачасем кубиксен енĕсене тытса пăхаççĕ, унтан сĕтел çине хураççĕ.
Воспитатель ачасене кубиксене пĕр-пĕрин çине хурса çӳллĕ çурт купалама сĕнет, хăйĕн кубикне кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Манăн миçе кубик?

А ч а с е м. Пĕр кубик.

В о с п и т а т е л ь. Çӳллĕ çурт тума мĕн чухлĕ кубик кирлĕ?

А ч а с е м. Нумай кубик кирлĕ.

Çавăн пек ĕçех пирамидка çаврашкисемпе туса ирттереççĕ. Пирамидка пултăр тесе ачасем черетпе патак çине çаврашкасем тăхăнтараççĕ.
*Пĕр çаврашка*, *нумай çаврашка* ăнлавсене çирĕплетеççĕ.

### *2-мĕш вăйă.* Теттесем парнелени

***Тĕллевсем:*** япаласен калăпне уйăрма тата вĕсен ячĕсене калама вĕрентесси (*кубик, çаврашка);* шутне палăртасси *(пĕрре – нумай)*; япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ тата калăпăшлă кубиксемпе пирамидка (кашни ачапа воспитатель валли), мулкач, упа, 2 карçинкка, хăюпа çыхнă коробка.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Мулкачпа упа ачасем патне хăнана килеççĕ. Воспитательпе ачасем чĕр чунсене сывлăх сунаççĕ.

Воспитатель лентăпа çыхнă коробка кăтартать.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра мулкачпа упа валли парнесем пур. Атьăрха вĕсене хăнасене парнелетпĕр.

Ачасем воспитательпе пĕрле коробкăри парнесене пăхаççĕ.
Воспитатель ачасене кубикпе пирамидка çаврашкисене черетпе кăтартать, япалан ячĕсене (кубик, çаврашка) сăмахпа калаттарать.

В о с п и т а т е л ь. Парнесем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр мулкача çаврашка парнелетпĕр, упана – кубик.

Воспитатель ачасене пĕрер çаврашка илме, вĕсемпе тĕрлĕ вăйăсем выляма сĕнет.
Тĕслĕхрен, çурăм хыçне пытарма, кустарма…
Ачасем мулкача çаврашкасем парнелеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мулкача мĕн чухлĕ çаврашка парнеленĕ?

А ч а с е м. Нумай çаврашка.

В о с п и т а т е л ь. Çапла, мулкача нумай çаврашка парнеленĕ.

Çавăн евĕрлĕ ĕçсемех кубиксемпе туса ирттереççĕ те вĕсене упана парнелеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Упана мĕн чухлĕ кубик парнеленĕ? Кубик нумай-и?

А ч а с е м. Кубик нумай.

В о с п и т а т е л ь (*ĕçе пĕтемлетсе*). Мулкача нумай çаврашка парнелеремĕр, упана – нумай кубик.

Ачасем воспитатель хыççăн сăмахсене каласа пыраççĕ.
Мулкачпа упа ачасене парнесемшĕн тав тăваççĕ, хăйсемпе пĕрле ташлама чĕнеççĕ.
Ачасем упапа пĕрле упа пек утаççĕ, мулкачпа мулкач пек сиккелеççĕ.

## *3-мĕш вăйă.* Кеглясемпе мечĕксем

***Тĕллевсем:*** япалан калăпне уйăрма тата вĕсен ячĕсене калама вĕрентесси (*мечĕк, кеглĕ);* шутне палăртма хăнăхтарасси *(пĕрре – нумай, сахал – нумай)*; япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ мечĕксемпе кеглясем (кашни ачапа воспитатель валли); физкультура хатĕрĕсене хумалли 2 сетка.

**В ă й ă ю х ă м ĕ**

Воспитатель кеглясем хунă сеткăна кăтартать. Пĕр кеглĕ кăларать те вăл мĕн япалине калать. Сеткăра миçе кеглĕ пулнине ыйтса пĕлет.

В о с п и т а т е л ь. Сеткăра кеглĕ нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Манăн миçе кегльă?

А ч а с е м. Пĕрре.

Ачасем воспитательпе пĕрле кегльăсен шутне палăртса хăвараççĕ.
Ачасем воспитатель хушнипе пĕрер кегльă илеççĕ, хăйсен миçе кегльă пулнине калаççĕ. (*Пĕрре.*)

В о с п и т а т е л ь (*тепĕр сеткăри мечĕксене кăтартать*). Сеткăра мечĕк мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Манăн вара миçе мечĕк?

А ч а с е м. Пĕрре.

Ачасем пĕрер мечĕк илеççĕ. Воспитатель ачасем миçе мечĕк илнине çирĕплетет (пĕрре), унтан мечĕксемпе тата кегльăсемпе выляма сĕнет.
Вăййа 2–3 хут ирттерме юрать.
Ачасем воспитательпе пĕрле кегльăсемпе мечĕксене уйрăм сеткăсене пуçтараççĕ, мĕн чухлĕ кегльă, мечĕк пулнине çирĕплетеççĕ. (*Нумай.*)

## *4-мĕш вăййă.* **Çÿллĕ тата лутра пирамидкăсем**

***Тĕллевсем:*** япалан шутне палăртасси *(пĕрре – нумай, нумай – пĕрре, сахал – нумай);* япалан çÿллĕшне палăртасси *(çÿллĕ, лутра).*

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тĕрлĕ çÿллĕшлĕ пирамидкăсем (кашни ачапа воспитатель валли), тутăр.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Сĕтел çине тутăрпа хупланă тĕрлĕ çÿллĕшлĕ пирамидкăсем хатĕрлесе хунă.

В о с п и т а т е л ь. Тутăр айне мĕн пытарнă-ши?

А ч а с е м. Пирамидкăсем.

В о с п и т а т е л ь (*пирамидкăсене юнашар хурать, танлаштарма ыйтать*). Пирамидкăсем пĕр пек-и?

А ч а с е м. Тĕрлĕрен.

В о с п и т а т е л ь (*çÿллĕ пирамидка çине кăтартса*). Ку пирамидка çÿллĕ.

Воспитательпе пĕрле ачасем пирамидăн çÿллĕшне алăпа çÿлелле кармашса кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*лутра пирамидка çине кăтартса*). Ку пирамидка лутра.

Воспитательпе ачасем пирамидка лутра пулнине пĕшкĕнсе ларса кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирамидкăсем илĕр. Лена, эсĕ миçе пирамидка илтĕн?

Л е н а. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Пирамидка çӳллĕ-и е лутра-и?

Л е н а. Çӳллĕ.

Ачасем мĕнле тата миçе пирамидка илнине калаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем пирамидкăн çаврашкисене кăларатпăр. Мĕн чухлĕ çаврашка сирĕн? (*Нумай.*)

В о с п и т а т е л ь. Пирамидкăсене пуçтаратпăр. Ваня, санăн миçе пирамидка?

В а н я. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Çӳллĕ пирамидкăсене лутра пирамидкăсемпе юнашар лартатпăр.

Ачасем воспитательпе пĕрле çӳллĕ пирамидкăсене пĕр рете, лутрисене тепĕр рете лартаççĕ. Воспитатель ачасене пĕчĕк (пысăк), çӳллĕ (лутра) пирамидкăсене тĕрĕс уйăрса сăмахпа калама ыйтать.

В о с п и т а т е л ь. Çӳллĕ пирамидкăсем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Лутра пирамидкăсем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр халĕ пурте пирамидка пек тăрар.

Воспитатель çӳллĕ пирамидка çине кăтартса: «Пирамидка çӳллĕ», – тет.
Воспитательпе пĕрле ачасем пирамидăн çӳллĕшне алăпа кăтартаççĕ.
Хыççăнах воспитательпе ачасем лутра пирамидкăпа та çак ĕçе туса ирттереççĕ.
Унтан воспитатель кашни ачана пирамидка илме хушать. Ачасем мĕнле тата миçе пирамидка илнине калаççĕ.
Ачасем воспитательпе пĕрле пирамидкăн çаврашкисене кăлараççĕ, мĕн чухлĕ çаврашкаран тăнине çирĕплетеççĕ. (*Нумай.*) Кайран пирамидкăсене пуçтараççĕ.
Ачасене воспитатель çӳлле пирамидкăна лутра пирамидкăпа юнашар лартма сĕнет.
Унтан пĕчĕк (пысăк), çӳллĕ (лутра) пирамидкăсене тĕрĕс уйăрса сăмахпа калама ыйтать.
Ачасем воспитательпе пĕрле çӳллĕ пирамидкăсене пĕр рете, лутрисене тепĕр рете лартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Çӳллĕ пирамидкăсем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Лутра пирамидкăсем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр халĕ пурте пирамидка пек тăрар.

Ачасем пĕр рете тăрса аллисене çӳлелле çĕклеççĕ, вĕсене пуç тăрринче пĕрлештерсе «çӳллĕ пирамидка» пулаççĕ, кайран кукленсе ларaççĕ те «лутра пирамидкăна» евĕрлеççĕ.

# Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

## *1-мĕш вăйă.* Мечĕке хапхана кĕртни

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ калăплă тата пысăкăшлă япаласене уйăрасси, хисепне кура ушкăнласси, *пысăк, пĕчĕк, кубик, мечĕк, нумай – нумай* ăнлавсемпе ĕçлесси; вĕсене çирĕплетесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ пысăк кубиксемпе пĕчĕк мечĕксем (кашни ачапа воспитатель валли), пысăк тата пĕчĕк машинăсем.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь. Машина мĕн турттарса килчĕ?

А ч а с е м. Кубиксемпе мечĕксем.

В о с п и т а т е л ь. Машина çинче кубик тата мечĕк мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь (*кубика мечĕкпе танлаштарса*). Кубик пысăк *(икĕ алăпа тытса кăтартать)*. Мечĕк пĕчĕк *(пĕр алла тытать)*.

Воспитатель сĕннипе ачасем машина çинчен пĕрер кубик илеççĕ те вĕсемпе тĕрлĕ ĕç туса ирттереççĕ: пытараççĕ, умне хураççĕ.

А ч а с е м. Акă пĕр кубик. Ку пысăк кубик.

Воспитательпе пĕрле ачасем кубиксенчен хапха купалаççĕ.
Ачасем мечĕксемпе те кубиксемпе ĕçленĕ пекех ĕçлеççĕ: пытараççĕ, умне хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, футболла выляр-и?

Воспитательпе пĕрле ачасем мечĕксене хапха еннелле кустараççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*ĕçе пĕтĕмлетсе*). Кубиксем пысăк-и?

А ч а с е м. Пысăк.

В о с п и т а т е л ь. Хапха валли мĕн чухлĕ кубик кирлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Мечĕксем мĕнле?

А ч а с е м. Пĕчĕк.

В о с п и т а т е л ь. Мечĕксем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель машинăсем илсе тухать, танлаштарма ыйтать. Ачасем машинăсене танлаштараççĕ, пĕри пысăк, тепри пĕчĕк пулнине калаççĕ. Пысăк кубиксене пысăк машина çине, пĕчĕк мечĕксене пĕчĕк машина çине пуçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Машина çинче кубик мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Мечĕкĕ мĕн чухлĕ?
А ч а с е м. Нумай.

Воспитательпе пĕрле ачасем А. Кăлкан сăвви тăрăх И. Степанов кĕвĕленĕ «Автобус» юрра юрласа хусканусем тăваççĕ.

В о с п и т а т е л ь п е  а ч а с е м.

Тӳрĕ тикĕс çулпала
Пĕр автобус вĕçтерет.
Хăйне ирĕк çул пама
Таçтанах вăл систерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Таптанатăн вĕт, асту!

Ай-хай лаши ăмăртса
Çул айккипе сиктерет.
Автобусĕ васкаса
Тата хытă вĕçтерет.

Ту-ту-ту! Ту-ту-ту!
Çулна лайăххрах асту.

## *2-мĕш вăйă.* Хапха купалани

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ калăплă япаласене уйăрасси, хисепне кура ушкăнласси, *пысăк, пĕчĕк, кубик, мечĕк, кирпĕч, сахал – нумай* ăнлавсемпе ĕçлесси; ăнлавсене çирĕплетесси; ансат япаласем купаласси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пĕр тĕслĕ кубиксемпе мечĕксем (кашни ачапа воспитатель валли), çав тĕслĕ икĕ кирпĕч, карçинкка.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь. Карçинккара мĕн пур?
А ч а с е м. Кубик, мечĕк, кирпĕч.

Воспитатель ачасене карçинккаран пĕрер кубик илсе сĕтел çине хума ыйтать. Унтан сĕтел çинче мĕн чухлĕ кубик пулнине палăртать.

В о с п и т а т е л ь. Кубик нумай.

Воспитательпе пĕрле ачасем кубиксене икĕ ретпе хире-хирĕç хурса тухаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*сĕтел çине темиçе кирпĕч хурса*). Ку мĕн?
А ч а с е м. Кирпĕч.

Кубиксемпе кирпĕчсен шутне танлаштараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кирпĕчĕ мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Сахал.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, ачасем, кубик – нумай, кирпĕч – сахал.

Воспитатель икĕ ачана черетпе кирпĕчсене кубиксем çине хума хушать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, сирĕн мĕн пулчĕ?

А ч а с е м. Хапха.

В о с п и т а т е л ь. Тĕрĕс, кубик çине кирпĕч хурсан хапха пулчĕ. Ачасем, пирĕн мечĕк нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель мечĕксене пĕрерĕн илсе хапха еннелле кустарма сĕнет.
Выляă хыççăн пурте пĕрле: «Кубик нумай, кирпĕч сахал, мечĕк нумай», –
тесе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ.

## *3-мĕш вăййă.* **Хăнара – хаваслă пукане**

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ калăплă япаласене уйăрасси, хисепне кура ушкăнласси, *пысăк, пĕчĕк, кубик, çаврашка, кирпĕч, сахал – нумай* ăнлавсемпе ĕçлесси; ăнлавсене çирĕплетесси; ансат япаласем купаласси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** пукане, пирамидкăн пĕр тĕслĕ çаврашкисем (кашни ачапа воспитатель валли), кубиксем, кирпĕчсем, коробка, пирамидка тĕнĕлĕ.

### В ă й ă ю х ă м ĕ

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пирĕн пата хăнана пукане килчĕ. Вăл сăвăлама та пĕлет.

П у к а н е.

Эп хаваслă пукане,
Кăмăллап ачасене,
Юрататăп савăнма,
Юрлама та ташлама.

В о с п и т а т е л ь. Пукане тус, эсĕ пушă алăпа килмен пулас?

П у к а н е. Çапла, хăнана пушă алăпа çӳремеççĕ. Ачасем, эпĕ илсе килнĕ коробкăра мĕн пур-ши?

А ч а с е м. Кубик, çаврашка, кирпĕч.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, çаврашкисем нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пĕрер çаврашка илĕр. Костя, миçе çаврашка илтĕн?

К о с т я. Пĕрре. Пĕр çаврашка.

В о с п и т а т е л ь. Çаврашкасене пирамидка тĕнĕлĕ çине тăхăнтартатпăр. Пирамидкăра миçе çаврашка?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, пĕрер кубик илĕр. (*Ачасем кубик илеççĕ.*) Мĕн илтĕр?

А ч а с е м. Кубик.

В о с п и т а т е л ь. Кубиксене пĕр рете хуратпăр. Кубик мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене кирпĕч илме хушать. Мĕн илнине ыйтать. (*Кирпĕч.*)
Ачасем кирпĕчсен енĕсене сăнаççĕ, тĕрлĕ енлĕ хурса пăхаççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ пуканесем валли сĕтел тăватпăр. Кирпĕче кубик çине хуратпăр. (*Ачасем воспитательпе пĕрле ĕçлеççĕ.*) Пуканесем валли мĕн турăмăр?

А ч а с е м. Сĕтел.

Ачасене воспитатель пĕрер çаврашка илме хушать. Миçе çаврашка илнине ыйтать. (*Пĕрре.*) Ачасем хăйсен çаврашкисене пирамидка тĕнĕлĕ çине воспитательпе пĕрле тăхăнтараççĕ, мĕн чухлĕ пулнине палăртаççĕ. (*Нумай.*)
Воспитатель ачасене пĕрер кубик илме сĕнет. Мĕн илнине ыйтать. (*Кубик.*)
Воспитатель хушнипе ачасем кубиксене пĕр рете хураççĕ,
мĕн чухлĕ пулнине палăртаççĕ. (*Нумай.*)
Воспитатель ачасене кирпĕч илме хушать. Мĕн илнине ыйтать. (*Кирпĕч.*) Ачасем кирпĕчсен енĕсене сăнаççĕ, тĕрлĕ енлĕ хурса пăхаççĕ.
Воспитатель кирпĕче кубик çине хурать те сĕтел тума вĕрентет. Ачасем пукане валли сĕтел тăваççĕ, хăйсем мĕн тунине ăнлантараççĕ. (*Сĕтел.*)

В о с п и т а т е л ь. Пукане валли мĕн чухлĕ сĕтел хатĕрлерĕмĕр?

А ч а с е м. Нумай.

Хăнана ачасем Э.Табаев çырнă «Пукане» юрра пĕр çавра юрласа параççĕ.
(Юрă тексчĕ юпа уйăхĕнче иртмелли 4-мĕш вăйăра пур.)

## *4-мĕш вăйă.* Пукане валли диван туни

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ тĕслĕ тата формăллă япаласене уйăрасси (*кубик, кирпĕч),* ӳт-пӳ пайĕсене кăтартма тата уйăрма вĕрентесси; ансат япаласем купаласси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** коробка, 2 пукане, хĕрлĕ тĕслĕ 3 кубикпе 3 кирпĕч, сарă тĕслĕ 3 кубикпе 3 кирпĕч.

## Вăйă юхăмĕ

Воспитатель. Алăкран кам шаккать-ши? Тухса пăхам-ха. (*Икĕ пукане илсе кĕрет.)* Пирĕн пата Машăпа Даша пуканесем хăнана килсе çитрĕç. Ачасем, пуканесене сывлăх сунар, вĕсемпе паллашар.

Воспитатель пуканесем ывăнни пирки калать, вĕсем валли дивансем тума сĕнет. Коробкăри кубиксемпе кирпĕчсене кăтартать.

– Ку мĕн? (*Кубик, кирпĕч.*)
– Кубик (кирпĕч) мĕн тĕслĕ?
– Вĕсемпе диван тума пулать-и? (*Пĕр-пĕрин çине купалама пулать.*)

Воспитатель хăй патне темиçе ачана чĕнсе хĕрлĕ тĕслĕ кубиксем илме сĕнет, унтан вĕсем мĕн илнине çирĕплетет. (*Ку кубик. Вăл мĕн тĕслĕ?*)
Воспитатель ачасене кубиксене ретпе хурса тухма пулăшать.
Унтан ытти ачасене хĕрлĕ кирпĕчсем илме ыйтать, ачасем мĕн илнине (*кирпĕч*) тата мĕн тĕслине (*хĕрлĕ*) çирĕплетет.
Воспитатель кирпĕче ансăр енĕпе кубиксемпе юнашар хума пулăшать.

Воспитатель. Диван пулчĕ те!

Çавăн пекех сарă кубиксемпе кирпĕчсенчен диван тăваççĕ.
Ачасем пуканесене дивансем çине лартаççĕ.

– Маша мĕн тĕслĕ диван çинче ларать?
– Даша мĕн тĕслĕ диван çинче ларать?

Пуканесем ачасене тав туса «Тяп-тяп тума» вăйă выляма сĕнеççĕ. Ачасем çавракана тăраççĕ, воспитатель П. Эйзин çырнă сăвă йĕркине калать, ачасем ун хыççăн кирлĕ хусканусем тăваççĕ:

Тяп-тяп тума
Тяппи пур.
Çат-çат тума
Алли пур.

Нăш-нăш тума
Сăмси пур.
Чăр-чар пăхма
Куçĕ пур.

## Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* Чĕрĕпсем валли – парне

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ тĕслĕ тата пысăкăшлă япаласене уйăрасси, вĕсемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** тӳмесем çĕлесе хунă чĕрĕп евĕрлĕ пысăк тата пĕчĕк минтерсем, тӳме йăлиллĕ пысăк симĕс тата сарă пĕчĕк çулçăсем (кашни ачапа воспитатель валли), карçинкка.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

В о с п и т а т е л ь *(сăвă вулать, ачасемпе пĕрле хусканусем тăвать).*

Чĕрĕп çăмха пулса выртрĕ, (*Аллисене пĕрлештереççĕ, пӳрнисене явăнтарса чăмăртаççĕ.*)

Кăтартать йĕпписене (*Аллисем чăмăрккара, пӳрнисене çĕклеççĕ.*)

Воспитатель чĕрĕп евĕрлĕ минтерсем кăтартать. Пысăкăшне танлаштарма сĕнет (пысăк тата пĕчĕк чĕрĕп).

– Ку чĕрĕп пысăк (пĕчĕк).

– Чĕрĕпсем çулçă пуçтараççĕ.

Воспитатель карçинккари çулçăсене кăтартать.

– Çулçă мĕн тĕслĕ? (*Сарă, симĕс.*)

– Çулçăсем пĕр пысăкăш-и? (*Сарă çулçа симĕс çулçă çине хурать, вĕсен пысăкăшне танлаштарать.*)

– Симĕс çулçă пысăк, сарă çулçă пĕчĕк.

– Пысăк чĕрĕпе мĕнле (пысăк е пĕчĕк) çулçă парнелер? (*Пысăк çулçă.*)

– Пĕчĕк çулça хăш чĕрĕпе парнелер? (*Пĕчĕк чĕрĕпе.*)

Ачасем хуравланă хыççăн воспитатель черетпе чĕрĕпсем çине çулçăсене тумелесе хурать.
Воспитатель ачасене пысăк чĕрĕпе пысăк çулçă парнелеме сĕнет.
Парнеленĕ çулçăсене минтер çине тӳмелеççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Пысăк чĕрĕпе мĕн тĕслĕ çулçă парнелерĕмĕр?

А ч а с е м. Симĕс.

Сарă çулçăсемпе те çакăн евĕрлĕ ĕçех туса ирттереççĕ.
Занятие сăвăпа тата «Чĕрĕп çăмха пулса выртрĕ»
пӳрне хусканăвĕсемпе вĕçлеççĕ.

## *2-мĕш вăйă.* **«Теттесем ăçта пытаннă?»**

***Тĕллевсем:*** тавралăха ăнланма вĕрентесси; япала вырăнне кăтартма хăнăхасси: *кунта, унта (лере), айĕнче, çинче (çийĕнче)* ăнлавсемпе ĕçлесси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** теттесем (автан, чăх, йытă, кушак, ĕне…) тата çак япаласен ӳкĕрчĕкĕсем.

### В ă й ă  ю х ă м ĕ

Заняти иртерес умĕн воспитатель теттесене пӳлĕмре тĕрлĕ вырăна пытарса хурать.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, хăнана теттесем килнĕ, анчах та пурте пытанса пĕтнĕ. Атьăр-ха вĕсене шыраса тупар.

Ачасем воспитательпе пĕрле шыраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Ку мĕн?
А ч а с е м. Йытă.
В о с п и т а т е л ь. Йытă мĕнле вĕрет?
А ч а с е м. Хам-хам!
В о с п и т а т е л ь. Йытă ăçта пытаннă?
А ч а с е м. Сĕтел *айне.*

Воспитатель теттене сĕтел çине хурать.

В о с п и т а т е л ь. Йытă халь ăçта ларать?
А ч а с е м. Сĕтел *çинче.*

Ачасем воспитатель пулăшнипе айне, айĕнче, çине, çинче сăмахсене çирĕплетсе хăвараççĕ.
Çавăн пекех ытти теттесене те тупса сĕтел çине хураççĕ. Кашни хутĕнчех воспитатель япаласем ăçта вырнаçнине интонаципе палăртса пырать, ачасене хăй хыççăн калаттарать.
Ачасем П. Эйзин çырнă «Ирхине» сăвва каласа чĕр чунсем мĕнле сас панине аса илеççĕ.

А ч а с е м.
Автан ячĕ авăтса:
Ки-ки-ри-ку!
Ячĕ чăх кăтăкласа:
Кăт-кăт-ик!
Çерçи ячĕ юрласа:
Чи-чи-чи!
Ĕне ячĕ мĕкĕрсе:
Му-у-у!
Ячĕ йытă та вĕрсе:
Хам-хам-хам!

## *3-мĕш вăйă.* **Пăравуспа çула тухни**

***Тĕллевсем:*** тĕрлĕ калăплă япаласене уйăрасси, хисепне кура ушкăнласси, *сахал – нумай, нумай – сахал, пĕрре – нумай, нумай – пĕрре* ăнлавсемпе ĕçлесси; воспитательпе пĕр енлĕн утма, çӳреме хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** картонран касса хатĕрленĕ «уçланкă», мулкачсем, пĕр çӳллĕ тата темиçе лутра чăрăш, икĕ карçинкка, пĕр пек мечĕксем (ачасен шутĕнчен икĕ мечĕк ытларах), картонран касса хатĕрленĕ çул.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Воспитатель ачасене пăравуспа çула тухасси çинчен пĕлтерет. Ачасем пĕр-пĕринчен тытса пăравус чупнă пек хусканусем тăваççĕ.
Пĕрремĕш чарăну – мулкачсем патĕнче хăнара.
«Уçланкăра» чăрăшсем ӳсеççĕ, ретĕн-ретĕн мулкачсем лараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Мулкач нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь (*пĕччен ларакан мулкача илсе*). Мулкач хăйĕн юлташĕсенчен юлнă та макăрать. Ан йĕр, мулкач! Ачасем, атьăр-ха ăна лăплантарар.

Ачасем воспитателе мулкача лăплантарма пулăшаççĕ: ачашлаççĕ, пĕрле сикеççĕ.

А ч а с е м (*воспитательпе пĕрле*). Ан йĕр, мулкач!

В о с п и т а т е л ь. Манăн алăра миçе мулкач?

А ч а с е м. Пĕрре.

В о с п и т а т е л ь. Уçланкăра вара мулкач нумай-и?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Атьăр манăн алăри мулкача ыттисемпе юнашар лартар.

Мулкача ыттисемпе юнашар лартнă хыççăн воспитатель ачасене чăрăшсене сăнама ыйтать.

– Чарăшсем пĕр пек-и?
– Миçе çӳллĕ чăрăш? *(Пĕрре.)*
– Лутра чăрăш мĕн чухлĕ? *(Нумай.)*

Пăравус малалла каять. Иккĕмĕш чарăну – вăйă лаптăкĕ. Унта мечĕксем тултарнă икĕ карçинккка: пĕринче мечĕк нумай, тепринче – сахал (иккĕ).

– Карçинккара мĕн чухлĕ мечĕк? *(Нумай.)*
– Ку карçинккара вара мечĕк мĕн чухлĕ? *(Сахал.)*

Ачасем карçинккаран пĕрер мечĕк илеççĕ. Мечĕксене çул тăрăх кустараççĕ, унтан карçинккана пуçтарса хураççĕ.

– Халĕ карçинккара мечĕк мĕн чухлĕ? *(Нумай.)*
– Ачасем нумай-и? *(Нумай.)*

Воспитательпе ачасем «пăравус» пулса «киле» таврăнаççĕ.

Каять, каять пăравус
Тĕлĕнтермĕш пăравус,
Урапасăр, тăрпасăр. Стоп!

## *4-мĕш вăйă.* Кимĕпе ярăнни

***Тĕллевсем:*** япаласене хисепне кура ушкăнласси, *пĕрре – нумай, нумай – пĕрре* ăнлавсемпе ĕçлесси; япаласене нумайлă хисепре каласси; воспитательпе пĕр енлĕн утма, çӳреме хăнăхтарасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** шыв тултарнă чашăк, хутран е пластмассăран хатĕрленĕ пĕр тĕслĕ тата пысăкăшлă кимĕсем (кашни ачапа воспитатель валли), поднос, салфетка.

### В ă й ă  ю х ă м ĕ

Воспитатель О. Новиковская сăввине вулать.

В о с п и т а т е л ь.

Кам кимĕпе ярăнать?
Унта уççăн кам юрлать?
Кимĕпе эп ярăнатăп,
Уçă сасăпа юрлатăп.

Ачасем воспитательпе пĕрле алăпа кимĕ кăтартаççĕ (ал тупанĕсене пĕрлештереççĕ, унтан пуç пӳрнесене ик еннелле сарса алăсене уçаççĕ, кача пӳрнесем пĕрлешсе юлаççĕ).

В о с п и т а т е л ь. Поднос çинче мĕнсем пур?
А ч а с е м. Кимĕсем.
В о с п и т а т е л ь. Вĕсем мĕн чухлĕ?
А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене кимĕпе выляма сĕнет: пĕр киммине илсе шыв тултарнă чашăка ярать.

В о с п и т а т е л ь. Кимĕ мĕн тăвать?
А ч а с е м. Ишет.
В о с п и т а т е л ь. Миçе кимĕ ишет?
А ч а с е м. Пĕрре.
В о с п и т а т е л ь. Поднос çинче кимĕ мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Ачасем, атьăр кимĕсене шыва ярар.

Ачасем хăйсен киммисене шыва яраççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Халĕ шывра мĕн чухлĕ кимĕ ишет?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь. Поднос çинче миçе кимĕ?

А ч а с е м. Пĕрре.

Кимĕсене пуçтарса поднос çине хураççĕ.
Ачасем кĕвĕ çеммипе шывра ишнĕ пек хусканусем туса воспитатель хыççăн утаççĕ.

**Пăрахут**

Манăн атă – пăрахут!
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Хам çине кушак лартатăп,
Тинĕс урлă эп каçатăп.
Ту-ту-тут! Ту-тут! Ту-тут!
Кил моряк пулма, Хветут!

## Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем

### *1-мĕш вăйă.* **Хуратпăр, куçаратпăр, пуçтаратпăр**

***Тĕллевсем:*** пĕр евĕрлĕ япаласене ушкăнласси, хисепне палăртасси, *пĕрре – нумай, нумай – пĕрре, нумай – нумай* ăнлавсемпе ĕçлесси; япаласемпе тĕрлĕ ĕç-хĕл тăвасси.

***Кăтарту хатĕрĕсем:*** мулкач, коробкăсем (кашни ача валли 3-шер тата воспитатель валли), 4 матрёшка, 4 кубик, 4 ункă.

**В ă й ă  ю х ă м ĕ**

Сĕтелсем çинче кăтарту хатĕрĕсем выртаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*сĕтел çинче ларакан мулкача илет те сăвă калать*).

Сăрă мулкач пит çăвать,
Хăнана килмеваскать.
Хăлхине те вăл çăвать,
Хӳрине те тасатать.
Ача саднелле чупать,
Пурне те салам калать.

Ачасем хусканусене тăваççĕ: мулкач пек сикеççĕ, вăл питне, хăлхине, хӳрине мĕнле çунине кăтартаççĕ.

В о с п и т а т е л ь (*коробкăсене кăтартса*). Мулкач мĕн илсе килнĕ?

А ч а с е м. Коробкăсем.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăсем мĕн чухлĕ?

А ч а с е м. Нумай.

Воспитатель ачасене ункăсем тултарнă коробкăна тупма сĕнет. Ункăсене пĕр рете хураççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Кунта мĕн чухлĕ ункă?

А ч а с е м. Нумай.

В о с п и т а т е л ь (*пĕр ункине илсе юнашар тăракан ачана парать).* Сашăн миçе ункă?

А ч а с е м. Пĕр ункă.

Ачасем ункăсене коробкăна пуçтараççĕ.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра мĕнсем?

А ч а с е м. Ункăсем.

В о с п и т а т е л ь. Коробкăра мĕн чухлĕ ункă?

А ч а с е м. Ункӑ нумай.

Кубиксемпе тата матрёшкӑсемпе те ҫакӑн евӗрлех ӗҫлеҫҫӗ.

## *2-мӗш вӑйӑ.* **Кукӑль пӗҫерни**

***Тӗллевсем:*** япаласене пысӑкӑшне кура ушкӑнласси, *пысӑк, пӗчӗк* ӑнлавсемпе ӗҫлесси; япаласемпе тӗрлӗ ӗҫ-хӗл тӑвасси.

***Кӑтарту хатӗрӗсем:*** пысӑк тата пӗчӗк витресем, савуксем (кашни ачапа воспитатель валли).

**В ӑ й ӑ   ю х ӑ м ӗ**

Вӑйӑ уҫӑ сывлӑшра иртет. Хӑйӑр купи йӗри-тавра пысӑк витресем лартнӑ: кашнин ӑшӗнче пӗчӗк витрепе савук.

В о с п и т а т е л ь. Ку мӗн?
А ч а с е м. Витре.
В о с п и т а т е л ь. Витрере мӗн пур?
А ч а с е м. Витре, савук пур.

Воспитатель пӗчӗк витрене кӑларса пысӑккипе юнашар лартать, вӗсене танлаштарать: «Пысӑк, пӗчӗк». Ачасем пысӑк тата пӗчӗк витресене кӑтартаҫҫӗ, сӑмахпа калаҫҫӗ.
Воспитатель пысӑк витрене хӑйӑр тултарать те «кукӑль» хатӗрлет (витрене ӳпӗнтерсе хӑйӑр купи тӑвать).
Ачасем пӗчӗк витрене хӑйӑр тултараҫҫӗ те «кукӑль» хатӗрлеҫҫӗ.
Кукӑльсене танлаштараҫҫӗ.

– Пысӑк кукӑль.
– Пӗчӗк кукӑльсем.
– Пысӑк кукӑль миҫе? (*Пӗрре.*)
– Пӗчӗк кукӑль мӗн чухлӗ? (*Нумай.*)

Карталанса тӑрса алран алла тытӑнаҫҫӗ, юрлаҫҫӗ.

В о с п и т а т е л ь п е   а ч а с е м.
Эпир кукӑль пӗҫеретпӗр, ак ҫапла пысӑккине (*аллисене ҫӳлелле ҫӗклеҫҫӗ*),
Эпир кукӑль пӗҫеретпӗр, ак ҫапла пӗчӗккине (*кукленсе лараҫҫӗ*).

# Пирĕн йытă

(2 ушкăнпа: ыйту – хурав)

Николай Казаков кĕвви
Борис Чиндыков сăвви



# ТУПМАЛЛИ

УМĔН КАЛАНИ ........................................................................................ 3
ПРОГРАММА СОДЕРЖАНИЙĔ ................................................................ 4
Авăн уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем................................ 5
Юпа уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ................................ 6
Чӳк уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.................................10
Раштав уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем...........................14
Кăрлач уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ...........................18
Нарăс уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем .............................22
Пуш уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем ...............................26
Ака уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем.................................31
Çу уйăхĕнче ирттермелли вĕрентӳллĕ вăйăсем...................................36
*Хушса пани:* Пирĕн йытă .........................................................................38

БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

**Ядранская Инесса Владимировна**
**Смирнова Лариса Алексеевна**

# ФОРМИРОВАНИЕ ЭЛЕМЕНТАРНЫХ МАТЕМАТИЧЕСКИХ ПРЕДСТАВЛЕНИЙ

*Методические указания для воспитателей дошкольных образовательных организаций, реализующих образовательные программы дошкольного образования с детьми 2–3-летнего возраста*

Редактор *Р.П. Прокопьева*
Верстка *И.В. Матвеевой*

Подписано в печать . Формат 60х90/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Тираж: 50 экз. Заказ № .

Чувашский республиканский институт образования.
428001, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, 5.

Отпечатано в типографии «Перфектум». г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. 52.
Тел.: (8352) 32-05-01